23-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
8
ЭРНЕКУН
6(6243) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ял Совечĕсем вăрçă кунĕсенче

Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе тысĕшĕн пыракан отечественнăй аслă вăрçă ял Совечĕсен ĕçне пысăк улшăнусем кĕртрĕ. Чи малтанах, вырăнти советсене суйланă депутатсенчен чылайĕшĕ нимĕç захватчикĕсемпе кĕрешме фронта кайнă май, ял Совечĕсенче депутатсем сахалланчĕç. Çавăн пекех вĕсенче ĕçлесси те нумай йывăрланчĕ. Çав вăхăтрах партипе правительство ялсовечĕсем умне халĕ мирлĕ вăхăтринчен пысăкрах та ответлăрах задачăсем лартать: тăван çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах пахчаçимĕç, промышленность валли чĕртавар парса тăмалла, ялти ĕççыннисене фронта пулăшнă тата государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçланă çĕре мобилизацилемелле, общественăлла хуçалăха—колхозсене пĕр вĕçĕмсĕр тĕреклетсе пымалла, шкулсене, клубсене, вулав çурчĕсене тата ялти мĕншур общественăлла организацисене ертсе, пулăшса пымалла, фронтовиксемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисемшĕн тăванла тăрăшмалла. Çак ĕçсене пĕрерĕн-пĕрерĕн мар, пурне те пĕр харăс, ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма, паллах, çăмăл мар. Ситменнине ялсовет исполкомĕсене ертсе пыма халиччен ку ĕçре пулман, опыт çукрах çынсем сахал мар хутшăнчĕç. Колхозсенчи опытлă кадрсем фронта тухса кайрĕç. Çаксем ĕнтĕ ăнлантах вырăнти советсенче пикенсе, вăрçă вăхăтĕнчи пек хăвăрт ĕçлеме хушаççĕ.

Пирĕн республикăри малта пыракан ялсовечĕсем тăван çĕршывпа фронт умĕнчи хăйсен тивĕçне туйса, партипе правительство тата Сталин юлташ колхозлă ял умне лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. [illegible]

[illegible]

тĕнчи колхозсем çак ĕç валли хăйсенех 1.000.000 тенкĕ укçа пухнă. Çав ялсоветри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума çур миллион тенкĕ укçа пухса, Сталин юлташа рапорт пачĕç. Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ вĕсене тăванла салам ячĕ тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ.

Фронта пулăшас ĕçе çакнашкал организациленĕ ялсовечĕсемпе колхозсем пирĕн республикăра вуншарăн шутланаççĕ. Ялсенчи партипе комсомол тата совет активĕ ăшă тумтирсем пухнă çĕрте, фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене пулăшнă çĕрте мухтава тивĕçлĕ примерсем кăтартаççĕ.

Ялсовечĕсем пулăшнипе 1942 çулта республикăри колхозсенчен пысăк пайĕ фронтпа çĕршыв валли тырă, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕртавар вăхăтра парса тăчĕç. Анчах пирĕн республикăра çителĕксĕр ĕçлекен ялсовечĕсем те пурхă. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене хăшпĕр колхозсемпе ялсоветсем тата вĕсен руководителĕсем пурнăçа кĕртеймерĕç. Çапла вара вĕсем халăх умĕнче совет çĕршывĕ умĕнче, тăшмана Хĕвеланăçнелле хăвалакан Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмлă пулчĕç.

Пирĕн республика вĕсене пула 1943 çул тĕлне авăн çапса пĕтерейменĕ, государство умĕнчи парăмсене татса çитерейменĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Чкаловски, Елчĕк, Октябрьски тата Пăрачкав районĕсенчи руководительсене, унти ялсоветсемпе колхозсене [illegible]

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра,** наступлени туса пырса, **Каргальско-Белянский, Вербовский, Мариинский, Холодный, Камышевская, Ясырев, Большая-Орловка, Чертковская** ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

Çурçĕр-Кавказра пирĕн войскăсем **Ново-Осетиновская, Красноградская, Урожайное, Матвеевский, 1-мĕш Кызбурун, 2-мĕш Кызбурун, 3-мĕш Кызбурун, Баксан, Старая Крепость, Карагач, Крем, Константиновская, Курская, Камово** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата **Аполонская, Солдатская** ятлă чугунçул станцийĕсене тытса илнĕ.

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем малтанхи енне**ллех** çапăçса пынă.

* * *

Январĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, штурмлакан вак группăсене уйăрăлса кĕрешсе, 23 блиндажа ишĕлтернĕ, вĕсенче тăнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Сталинградран хĕвеланăçнерехре пĕр высоташăн çапăçу пырать. Противник вăйлăн хирĕç тăрать, анчах та пирĕн подразделенисем малалла кайса 70 окопа йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 10 станковăй тата 18 ручной пулемет, 11 автомат, 285 винтовка, 2 противотанковăй пăшал, радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Пирĕн лечиксем аэродромсенче нимĕçсен 3 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче противникăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла наступлени тунă та халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсене оборонăн меллĕ рубежĕнчен хĕссе кăларнă, вĕсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Н-ски соединенин боецĕсем юлашки çапăçусенче нимĕçсенчен 6 танк, 85 автомашина, 3 трактор, 32 пулемет, 2.000 авиабомба, 3.000 снаряд, противотанковăй пăшалсем, автоматсем, винтовкăсем нумай тата ытти тĕрлĕ трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Н-ски чаçăн танкисчĕсем çапăçса пырса малалла куснă та нимĕçсене халăх пурăнакан вăйлă тĕреклетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 18 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Противникран 4 оруди, 13 пулемет, 22 противотанковăй пăшал тата çыхăну пурлăхĕн складне туртса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче противникăн контратакисене сирсе янă. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра Иванов юлташ ертсе пыракан гвардеецсем гитлеровецсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă. Нимĕçсем, çав пункта каялла туртса илесшĕн пулса, контратакăна пехотăпа танксен пĕр ушкăнне кĕртсе янă. Икĕ сехет хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн противника каялла сирсе янă. Тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă.

* * *

Çурçĕр Кавказра совет войскисем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла кайнă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски часть халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 12 танк, 25 пулемет, 2 оруди, 60 мотоцикл тата боеприпассемпе алăра тытмалли хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. 66 çынна тыткăна илнĕ. Зенитлăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ, 14 самолетне сиенленĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пĕр пунктра вырнаçнă нимĕç гарнизонне сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем 35 гитлеровеца вĕлернĕ те каялла кайма тытăннă. Нимĕçсем партизансене хăваласа çитме пысăк карательнăй экспедици янă. Партизансем, лайăх маневр туса илсе, карательсене юнашарти пункта, нимĕç подразделенийĕ тăракан пункта хирĕç лнă. Çав пунктра тăнă нимĕç салтакĕсем карательсене партизансем вырăнне хурса вĕсене пеме тытăннă. Çапла гитлеровецсем хушшинче çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçура икĕ енĕн пĕтĕмпе 60 çын пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Украинăри совет хулине Кременчуга тĕрмесен хули туса хунă: Унта нимĕçсем таврари ялсенчен пиншер мирлĕ совет гражданĕсене Германин çар влаçĕсен приказĕсене саботаж тăваççĕ пуль тесе шутласа пухнă. Унта Кременчугри махорка фабрикин типĕтмелли сарайĕн районĕнче гитлерла палачсем çав тытса хупнă çынсене тискеррĕн асаплантараççĕ, унтан вара вĕлереççĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, фашистла ирсĕрсем декабрь уйăхĕнче Кременчугра мирлĕ совет гражданĕсене 2 пин çынна ытла персе вĕлернĕ.

Январĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, Центральнăй фронтра тата Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче противник çинне персе тăнă тата разведка тунă. Заводсен районĕнче пирĕн штурмлакан группăсем тăшманăн темиçе блиндажне тытса илнĕ. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре противника темиçе хут та тапăннă. Пирĕн войскăсем нимĕçсен разведка тăвакан групписене тĕп вăйĕсенчен татса илнĕ те нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра, противникăн позицийĕсене атакăласа, пирĕн подразделенисем 20 окопа йышăнса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем çĕрле противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та, сасартăк атакăласа, халăх пурăнакан икĕ пункта тытса илнĕ. Пирĕн боецсем, штыксемпе тата гранатăсемпе çапăçса, 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ тата нимĕçсен 100 салтакне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем 4 оруди, 6 противотанковăй пăшал, 200 винтовка, 20 ручной тата 5 станковăй пулемет, 20 пин патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн тылне кĕрсе кайнă та тăшманăн фронт патне пыракан подкреплениййĕсене çапса аркатнă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 48 автомашина, 12 противотанковăй оруди, 4 полевой оруди пур. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противник вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах малалла куснă та халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Н-ски часть, противникăн контратакине сирсе ярса, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Чернов юлташ ертсе пыракан йĕлтĕрçĕсен штурмлакан группи халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕç гарнизонне сасартăк тапăнса аркатса тăкнă. Çапăçура нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Кавказра пирĕн чаçсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе ярса, ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Халăх пурăнакан пысăк пунктшăн пынă çапăçусенче Н-ски соединени тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă тата 28 танк, 7 бронемашина, 160 автомашина, 21 оруди, 74 пулемет, 33 миномет тата боеприпассемпе продовольстви темиçе складне тытса илнĕ. Противникăн 200 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Сумы облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ эрне хушшинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен казармине тата продовольстви складне çунтарса янă. 6 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата противникăн пĕр поездне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕçсен фашистла оккупачĕсемпе çапăçса, партизансем 6 пулемет, 3 автомашина, 42 винтовка, 16 пистолет, боеприпассем тиенĕ 8 лав тата 42 пин патрон тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктра партизансем нимĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те гитлеровецсем персе пăрахмалла тунă 7 совет гражданне ирĕке кăларнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Краснодар хулинче çынсене касса вĕлерсе çӳренĕ. Хулан пĕр районĕнче совет хĕрĕ хăйне пусмăрлама хăтланнă нимĕç офицерне вĕлернĕ. Гитлеровецсем бандита питĕ чаплăн пытарнă, ун хыççăн вара мирлĕ пурăнакан çынсене, хĕрарăмсемпе ачасене, вĕлерме тытăннă. Вĕсем çуртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе кайса çемьи-çемьипе касса тухнă. Пĕр кун хушшинче фашистла ирсĕрсем хулари мирлĕ çынсене 300 çынна ытла вĕлернĕ.

42.489.000 тенкĕ государство банкне панă

Республикăри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума январĕн 6-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 40.614.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 1.875.000 тенкĕ укçа пухса Государство банкне хывнă. Çапла вара пурĕ 42.489.000 тенкĕ пухăннă. Укçа пухас тĕлĕшпе малтанхи пекех Пăрачкав районĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать. Унта танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 3.086.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 117.000 тенкĕ пухнă. Иккĕмĕш вырăнта—Улатăр районĕ, унта çак ĕç валли 2.784.000 тенкĕ пухнă. Виççĕмĕш вырăнта—Шупашкар районĕ, унта танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2. 217.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 148.000 тенкĕ пухнă. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе Вăрнар, Канаш, Чкаловски, Калинино районĕсем те лайăх туса пыраççĕ. Анчах Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Йĕпреç тата Элĕк районĕсем ку ĕçе халичченхи пекех сӳрĕккĕн туса пыраççĕ-ха. Шăмăршă районĕ çак ĕç валли пĕтĕмпе те 428.000 тенкĕ çеç укçа пухнă. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай районĕ те çак ĕç валли 752.000 тенкĕ çеç хывнă. Октябрьски районра та танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума юлашки пилĕк кун хушшинче 37.000 тенкĕ кăна пухнă.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас тĕлĕшпе Елчĕк, Шупашкар, Кувакине, Шăхасан тата Ишлей МТС-сенче лайăх ĕçлеççĕ. Анчах ку ĕçе Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай МТС-нче çаплах сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Вĕсем çак ĕç валли 8.000 тенкĕрен пуçласа 26.000 тенкĕ таран çеç пухнă.

Танксемпе самолетсем тума район пĕтĕмпе 3.275.900 тенкĕ пухнă

ПĂРАЧКАВ, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнерхи кун тĕлне районри колхозниксемпе колхозницăсенчен, трактористсемпе трактористкăсенчен тата колхозсенчен танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума пĕтĕмпе 3.275.900 тенкĕ укçа Государство банкне пырса кĕнĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 3.060.900 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 115.000 тенкĕ, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 100.000 тенкĕ пухнă. Танксен колоннине тума Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 148.000 тенкĕ хывнă. Милютино ялсоветĕнчи ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Когина юлташ боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 1.000 тенкĕ панă.

Сталин юлташăн саламĕпе хавхаланнă пирĕн районри ĕççыннисем ку ĕçе малалла та пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ.

М. БЕЛОГЛАЗОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Шупашкарти медицина активĕн примерĕпе

Шупашкарти медицина активĕн примерне йышăнса илсе, Н-ски госпитальри врачсемпе служащисен коллективĕ январĕн 5-мĕшĕнче танксен «Медработник» ятлă колоннине тума 22.656 тенкĕ, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 3.500 тенкĕ, пĕтĕмпе 26.156 тенкĕ укçа пухса государство банкне хыврĕç.

СОКОЛОВ,
Н-ски госпиталĕн начальникĕ.

Комсомолецсем самолетсен эскадрильине тума пиншер тенкĕ укçа параççĕ

Чкаловски районри «РОКК» колхоз çамрăкĕсен паха пуçарăвĕ республикăри мĕншур комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинче вăйлăн сарăлать. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе тарăнăн туйса тăрса, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем çак ĕçе пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. «Безбожник» колхоз членĕ, комсомолка В. Измайлова юлташ 8.000 тенкĕ, Войков ячĕпе тăракан колхозри М. Иванова комсомолка 5.000 тенкĕ хывнă.

«Çĕнĕ Юнга» колхоз çамрăкĕсем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума пĕр кун хушшинче 20.000 тенкĕ пухнă. Райпотребсоюзри çамрăксем çак ĕç валли кашни уйăхри ĕçукçине панă.

Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухас ĕçе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çамрăксем те активлăн хутшăнчĕç. «Красная звезда» колхоз çамрăкĕсем çак ĕç валли кĕске вăхăт хушшинче 12.000 тенкĕ пухнă. Гамбуровпа Комаров комсомолецсем кашниех 1.500-шер тенкĕ панă.

Г. ПЕТРУХИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—илемлĕ литература кĕнекисем

КАЛИНИНО. Сталин юлташăн докладĕпе приказĕ çине ответлесе педучилищĕре вĕренекенсем мухтавлă воинсене тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăма тытăнчĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ кĕнекесем пухрĕç. Халĕ вĕсем пурĕ 215 кĕнеке, 1.350 тенкĕлĕх пухнă. Ку ĕçре уйрăмăнах иккĕмĕш «А» тата иккĕмĕш «В» классенче вĕренекенсем малта пыраççĕ. Вĕсем кашниех 250-шар тенкĕлĕх кĕнекесем пухнă. Пухнă кĕнекесем хушшинче М. Горький, Щедрин. Л. Толстой писательсен сочиненийĕсем пур.

А. ФИЛИППОВ.

Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ

СОВЕТСКОЕ, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Район государствăна тырă парас плана декабрĕн 27-мĕшĕнче тултарчĕ. Кăçал пирĕн районри колхозсем çĕршыва 25.540 центнер тырă пачĕç.

Государство умĕнчи хăйсен малтанхи тивĕçне пурнăçланă хыççăн нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă хывма тытăнчĕç. Январĕн 5-мĕшĕ тĕлне районри 44 колхоз государствăна планран ирттерсе 991 центнер тырă панă. Вăл хисепре колхозниксем хăйсен тупăшĕнчен уйăрса панă тырă 345 центнер шутланать.

«Электросвет» колхоз, тĕслĕхрен, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 26 центнер ытла тырă пачĕ. Çавăн пекех «Рекорд», «Спутник колхозника», Калинин ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 25—30-шар центнер тырă хыврĕç.

«Рекорд» колхоз членĕ Антонина Иванова хăйĕн фондĕнчен Хĕрлĕ Çара валли 6 пăт тырă пачĕ, «Трудовик» колхоз членĕ, отечественнăй вăрçă инвалидĕ П. Андрианов юлташ Хĕрлĕ Çар фондне центнер çурă тырă хыврĕ, унăн примерĕпе колхозник А. Белов юлташ та пĕр центнер çурă пачĕ.

Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксене саламлани çине ответлесе, çĕрĕçĕпе çыхăнса тăракан районри служащисем те Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывма тытăнчĕç. Районри сберкасса заведующийĕ С. Герасимов юлташ Хĕрлĕ Çар фондне пĕр центнер, нимĕçсем оккупациленĕ Совет районĕнчен куçса килнĕ, халь районри супу-илӳ органĕнче ĕçлекен Швец юлташ пĕр пăт тырă, 5 пăт çĕрулми пачĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă хывас ĕç пур колхозсенче те малалла пырать.

П. НИКИТИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн землякçем

Учитель-фронтовиксем

Гитлеровецсене хирĕç çыракан отечественнăй вăрçă фрончĕсене Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнчен 14 учитель кайнă. Хĕрлĕ Çар ретĕнчи вунтăватă воинăн ĕçĕсемпе Кĕçĕн Кипек шкулĕ тивĕçлипе мухтанать.

Нумаях пулмасть шкулăн юратнă учителĕ лейтенант П. Косин хăйĕн вĕренекенĕсем патĕнче пулчĕ. Владимир Ильич ячĕпе хисепленекен 6-мĕш отрядри пионерсем ăна ăшшăн кĕтсе илчĕç, хăйсен учителĕн паттăр ĕçĕсемпе хавхаланчĕç. П. Косин пионерсене фронтри кĕрешӳ çинчен каласа пачĕ.

— Нимĕнех те çук манăн кĕрешӳре,— тет вăл.—Хĕрлĕ Çарăн кашни воинех ун пеккине тăвать. Пĕррехинче эпир Мускавран сакăрвунă километрта тăраттăмăр. Тăшман вăйĕсене хирĕç эпир тул çутăличчен тухрăмăр. Вĕсен йышĕ пирĕннинчен пысăк пулчĕ. Калинин ячĕпе хисепленекен колхозлă ялта гитлеровецсем тăратчĕç. Пирĕн епле пулсан та вĕсен ДОТ-не çапса аркатмалла. Ну, кайрăмăр. Вĕсем пирĕн çине, эпир вĕсем çине. Ял пирĕн алла куçрĕ.

Вăрçа кайиччен физикăпа вĕрентнĕ А. Савельев та нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешсе хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Хĕрлĕ Çар командованийĕ ăна, взвод командирне, ытти боецсемпе пĕрле нимĕç чаçĕсен тылне янă. Унта паттăр воинсем тăшманăн 6 бензохранилищине, хĕçпăшалсен 4 складне, тумтирсен 12 складне, 1 штаба тата вăрманти çулсемпе иртекен обозсене нумай пĕтерсе тăкнă.

А. Савельев гитлерла бандитсен тискерлĕхĕсене курнă. Хăйĕн арăмĕ патне янă çырура вăл çапла çырать. «Асăнма та хăруш. Нимĕç çарçынни вăл—чăнчăн бандит, çаратуçă, намăссăр ĕçсем тăваканскер, тискер кайăк пекех, ниме уяса тăманскер. Нимĕçсем оккупациленĕ ялта, пĕррехинче, çав бандитсем 11 хĕре, вунултă-вунçичĕ çулхискерсене, штаба илсе пынă та намăслантарнă. Кайран пурне те пĕрле çарамаслантарса, вăрмана каларса янă. Сивĕпе вĕсем йăлтах кӳтсе кайнă, вилме патне çитнĕ. Пирĕннисем çав хĕрсене вилес умĕн тĕл пулса, хамăр штаба çитерчĕç те, пулăшу пачĕç. Паллах, çаксене курсан, киле таврăнасси çинчен мар, часрах, мĕнпур асапшăн урнă йытăсене тавăрас шухăш пулать».

Çавăн пекех, шкулта завуч пулса ĕçленĕ Г. Андреев та халĕ гитлеровецсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. Политрук Андреев ертсе пынипе пирĕн боецсем тăшманăн атакисене паттăррăн сире-сире янă. Кăнтăр хĕвеланăç фрончĕнчи Р. хули хĕрринче гитлеровецсем, танксен вăйĕсене йышлăн илсе пырса, виçĕ хутчен хула урамне кĕрсе кайма хăтланнă. Вара Г. Андреев боецсене мĕнпур пек гранатăсемпе патронсем пĕтиччене тăшмана хирĕç тăма приказ панă. Фашистсен унки ăшне юлнă хулана парас мар тесе пилĕк кун хушши çапăçнă хыççăн, противник вăйне чакарса, ункăна татса тухнă та Хĕрлĕ Çарăн тепĕр чаçĕпе пĕрлешнĕ. Минометчиксем нимĕçсен 3 танкне тата пĕр ротăна яхăн офицерсемпе салтаксене пĕтерсе тăкнă. Политрук Г. Андреев хăй çак çапăçусенче 17 нимĕçе персе вĕлернĕ, ытти майсемпе вĕлернисене вăл «текущий счета» илмен.

Шкулăн паттăр воинĕ, вăтăр икĕ çул фронтсемпе çар службинче иртгернĕ батальон командирĕ, граждан вăрçин участникĕ Степан Порфирьев вăрçăн чи малтанхи кунĕсенчех фронта кайнă. Çулталăк сурра яхăн ĕнтĕ вăл хăйĕн ватлăхне пăхмасăр, нимĕçсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. С. Порфирьев икĕ хутчен тăшман ункинче пулнă. Пĕррехинче Одесса хулишĕн кĕрешнĕ чухне, мăклă шурлăх варринче уйăх ытла пурăннă. Тăшман ункине çĕмĕрме вăйсем чакса пынă. Продовольстви те пĕтсе çитнĕ. Тăшман хĕснĕçемĕн хĕснĕ, анчах паттăр воинсем пĕр минутăлăха та шикленсе ӳкмен. С. Порфирьев хăй, тăшман пульлисем айĕн разведкăна тухса кайнă та, тăшман ункинĕн «çĕрĕкрех» вырăнне шыраса тупнă. Вара, пĕтĕм вăя пухса, батальона çăлса кăларнă, нимĕçсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Çапăçусенче хăйсене палăртнисем хушшинче Шăхасан районĕнчи Вăрманкас Кипек ял çынни Владимир Христофоров та пур. Вăл Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнче хими тата биологи предмечĕсемпе вĕрентнĕ. Фронтра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна правительство наградине пама тăратнă. Тăван аншĕ патне янă çырура Н-ски штаб начальникĕ ун çинчен çапла çырать: «Сирĕн ывăлăн ĕçĕсем пире калама çук хавхалантараççĕ. Вăл вилĕмрен нихăçан та хăрамасть, вилĕме кирек хăçан та çĕнтерет». Паттăр воин, учитель-фронтовик В. Христофоров халĕ те гитлерла çынçиенсене хирĕç паттăррăн кĕрешет.

И. Петров юлташа Кĕçĕн Кипек ялçыннисем советсен суйлавĕнче депутата тăратнă. Вăл, шкул директорĕ пулса ĕçленĕскер, вăрçă тухсан икĕ уйăхранах фронта каять. Депутат И. Петров хăйĕн суйлавçисем патне çапла çырать: «Манăн юратнă шăллăм, тискер финсене хирĕç çапăçса, Выборг урамĕнче ӳкнĕ. Сывлăшĕ тухас умĕн Аслă Сталин ятне асăнса кĕрешĕве чĕннĕ. Эпĕ халь фински фронтра ирсĕр тăшмана шăллăмшăн та тавăрăп».

А. Савинов ертсе пыракан отделени Кăнтăр фрончĕсенчен пĕринче румынсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ. Çак кĕрешӳре хĕрӳллĕ командир А. Савинов пуçне хунă. Шкул директорĕ патне янă çырура унăн отделенийĕнчи боецсем çапла çыраççĕ: «Сирĕн учитель А. Савинов юлташ тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн пуçне хучĕ. Анчах юлашки сывлăш тухса пĕтиччченех вăл чи малти ретре пулса, пире хавхалантарса пычĕ. Паттăр воинăн хăюллă образĕ пире çĕнĕ атакăсене хастарлăн кĕрсе кайма пулăшĕ. Çавăн пек маттур учитель панăшăн сире тав тăватпăр».

Çапла çапăçаççĕ пирĕн учитель-фронтовиксем. Çапла çапăçаççĕ Д. Афанасьев, М. Миронов, Н. Кириллов, Т. Данилов тата ыттисем те.

Хĕрлĕ Çар ретне ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ хастарлă общественница М. Л. Ломоносова иртнĕ март уйăхĕнче кайрĕ. Халĕ вăл тăшмана хирĕç хĕрӳ вăрçа кĕнĕ. Хĕрарăм—воин, санитарка Ломоносова çапăçу хирĕнче аманнă воинсене сахал мар пулăшнă. Хăй те нумай нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

Учитель-фронтовиксем! Сире хăвăр юлташăрсем, вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем манмаççĕ. Хăюллăнрах çапăр тăшмана! Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, тăван çĕршыври шкулсемшĕн кĕрешĕр! Чап та мухтав Сире пирĕн землякçем.

С. СЕЛЕЗНЕВ.



Укерчĕк çинче: пирĕн земляк — старший лейтенант **Т. Е. Майоров** юлташ. Нимĕç завхатчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче хастарлăх кăтартнăшăн ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

ЙĔЛТĔРÇĔСЕМ ХАТĔРЛЕТПĔР

ВĂРМАР. Хоруйĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем тата «Пионер» колхозăн çамрăкĕсем килте йĕлтĕр тăвассине организациленĕ. Шкулăн та, колхоз правленийĕн те пĕр йĕлтĕр пулман пулсан, паянхи куна 55 мăшăр йĕлтĕр тунă ĕнтĕ.

Туллимар вăтам шкулта 4—7-мĕш классенче вĕренекенсем вăрçă ĕçне вĕренмелли урокра тренировкăллă занятисем туса ирттереççĕ. Унсăр пуçне, канмалли кун уйрăм пĕчĕк походсем организациленĕ. Колхозри 50 çамрăкран йĕлтĕрçĕсен команди организациленĕ. Каникул вăхăтĕнче çак команда чылай пысăк походсемех туса ирттерме палăртнă.

Йĕлтĕрçĕсен команди куллен ӳссе пырать. Çамрăксен йĕлтĕр спортне хутшăнас кăмăл пысăк.

А. ИВАНОВ,
Хоруйĕнчи туллимар вăтам шкулти военрук.

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсен I—IV-мĕш класĕсенче вĕренекенсене çар ĕç тĕлĕшпе пуçламĕш пĕлӳ парасси, вăтам шкулсен V—X-мĕш класĕсенче тата техникумсенче вĕренекенсене призывччен çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление Хыймалакассинчи туллимар вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсен коллективĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Вĕренекенсем пурте çар ĕçне «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пыма пулчĕç. Шкулта физкультура кружокĕ хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Халĕ йĕлтĕрпе çӳреме тата çар ĕçне вĕренме уйрăм командăсем организациленĕ. Военрук отечественнăй вăрçă участникĕ Дивиткин юлташ, взвод командирĕсемпе тăтăшах занятисем ирттерет. Йĕлтĕрпе лайăх çӳреме вĕренме шкул çак кунсенче 25 мăшăр йĕлтĕр туянчĕ. Вĕренекенсем йĕлтĕр спорчĕпе питĕ интересленеççĕ. Вĕренекенсене йĕлтĕрпе хăвăрт çӳреме хăнăхтарас тесе, кашни эрнерех тренировкăллă занятисем ирттеретпĕр.

Н. ПЕТРОВ.

Вăрман ĕçĕсен хăвăртлăхне ӳстермелле

Республикăри вăрман промышленность халăх комиссариачĕ иртнĕ çулхи ĕçсен планне тĕпрен илсен, ăнăçлăн вĕçлерĕ. Анчах та вăрман хатĕрлекен предприятисем кăçалхи ĕçсен планне пурнăçа кĕртме çӳрĕк тытăнчĕç. Чугунçул транспорчĕ валли январĕн малтанхи пилĕк кунĕнче вутă хатĕрлемелли графика 35 процент çеç тултарнă, çĕршыв умĕнче çак вăхăтра хатĕрлессипе 13 пин кубометр, турттарассипе 14 пин кубометр парăма кĕнĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕç çапла çӳрĕк пуçланни хăшпĕр леспромхозсем иртнĕ çулхи çитĕпӳсемпе лăпланса ларма пăхнинчен тата районсем ĕç вăйне çителлĕксĕр панинчен килет. Январĕн малтанхи кунĕсенче республикăра планпа палăртнинчен çуран 45 процент, лашапа 38 процент çеç ĕçленĕ. Ĕç вăйне уйрăмах Чкаловски, Пăрачкав, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсем начар парса тăраççĕ. Чкаловскипе Пăрачкав районĕсенчен, сăмахран, вăрмана çуран 240 çын, лашапа 290 çын ямалла пулсан, пĕтĕмпе те 3—4 çын çеç янă. Хальхи вăхăтра вăрмана ĕç вăйĕ тăратмалли плана республикăри пĕр район та пурнăçа кĕртсе пымасть.

Вăрман хатĕрлемелли план ĕç вăйĕ çителĕксĕр пирки тулса пыманни килĕштермелле япала мар. Районсенчи партипе совет организацийĕсен вутă хатĕрлевĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ çынсемпе лашасене пĕтĕмпех памалла, вăрман хатĕрлекен предприятисен çĕнĕрен пынă ĕç вăйне задание тултаричченех çирĕплетсе хăвармалла. Леспромхоз руководителĕсен рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, вĕсене тухăçлă ĕçлеме кирлĕ условисем туса парассишĕн ытларах тăрăшмалла. Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе пуçланнă ăмăртăва хутшăнса, плана кашни леспромхоз тăрăх тата кашни кун тултарса пымалла.

ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕН ФЕРМĂРА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Çĕнĕ Субарти «Красная Чувашия» колхоз (председателĕ М. Мефодьев) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе 1942 çулта чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Государство планĕ тăрăх 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне фермăра 60 пуç сысна пулмалла пулнă. Ферма заведующийĕ К. Хрисанов юлташ государство планне срокчен пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленĕ. Çамрăк çăвăрсене лайăх пăхас ĕçе тĕплĕн йĕркеленĕ. Çапла вара фермăра сыснасен йышĕ 64 пуçа çитнĕ:

Иртнĕ çулта фермăра 5 сысна аминчен 116 çăвăр илнĕ. Уйрăмăн илсен, «Сонька», «Маруся» ятлă амасем 16-шар çăвăр тунă. Çамрăк çăвăрсене пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕ. Çакна пула сыснасăр колхозниксене 65 çăвăр, юнашар колхозсене 18 çăвăр сутма пултарнă.

Колхоз сысна фермисенчен çулсеренех пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта сысна ферми колхоза 112.800 тенкĕ ытла тупăш панă. Çак тупăшран колхоз оборона мероприятийĕсем валли сахал мар укçа-тенкĕ хывнă. Государство умĕнче тăракан парăмсене срокчен парса татнă, 1943 çулшăн брынза-чăкăт парассине 100 процент, аш-какай парас обязательствăна 80 процент пурнăçланă.

С. ШАДИН.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх

5 кун хушшинче уя 2.420 тонна тислĕк кăларнă

ЕТĔРНЕ, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Уйăхлăх пуçланнăранпа пилĕк кун хушшинче районри колхозсем уя 4.840 лав тислĕк кăларчĕç. Тислĕк пухас тата ăна уя кăларас ĕç пур колхозсенче те вăйланса пырать. Планпа палăртнă задание чылай колхозсем ирттерсе тултараççĕ. Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз пилĕк кун хушшинче уя 750 лав, Полянкăри Киров ячĕпе тăракан колхоз 705 лав, Засурскинчи «Красноармеец» колхоз 800 лав тислĕк кăларнă.

Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлесе уя кăларас ĕçе лашасен хисепĕн 20 процентне пĕтĕмĕшпех хӳлнĕ. Уя тислĕк кăларас ĕçре тата вырăнти ытти удобренисене пухнă çĕрте уйрăмах çамрăксем хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем пилĕк кун хушшинче пурĕ 543 центнер кĕл, 356 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

И. ЛЕПЕШКИН,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

ТИСЛĔКЕ УЯ КĂЛАРАÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çирĕккассинчи «Комбайн» колхоз (председателĕ И. Кузьмин юлташ) çуракине хатĕрленсе уя 1.210 лав тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес ĕç халь, уйăхлăх пуçланнă хыççăн, татах та вăйланчĕ. Кĕске вăхăтрах колхозра 12 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Çавăн пекех уя тислĕк турттарас ĕç «Авангард революции», «Хĕрлĕ Октябрь» тата ытти нумай колхозсенче те аван пырать. Кив Тутайкассинчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз уя 1.175 лав тислĕк кăларчĕ, 8 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕ.

П. ЛЕНАР.

УДОБРЕНИСЕМ ПУХАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Вăрманкасри «Сила» колхоз (председателĕ А. Павлов юлташ) членĕсем вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Колхозниксем, 1943 çулта иртнĕ çулхинчен те вăйлărах тырпул туса илес тесе, çак кунсенче 12 пăт кĕл, 92 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлесе пачĕç. Кунсăр пуçне, кăçал çуртыррисем акмалли вырăна 1.020 лав тислĕк кăларнă.

Колхоз акмалли вăрлăхсене те сортлама тытăннă. Е. Никитина, В. Петрова колхозницăсем виçĕ кун хушшинче 300 пăт сĕлĕ вăрлăхĕ сортласа хатĕрленĕ. Халĕ вĕсем тулă вăрлăхне сортлаççĕ. Колхозăн акмалли вăрлăхсем çителĕклĕ. Вĕсен шăтаслăхĕ те начар мар.

С. Ш.

Виçĕ бригада çулталăкри плана тултарчĕ

ИШЛЕЙ, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар воинĕсен фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, трактористсем, ремонт тăвакан рабочисем тракторсене юсас ĕçре пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. МТС коллективĕ кăçал кашни машинăна, кашни трактора çирĕп юсаса ĕçе кăларассишĕн кĕрешет. Тракторсене ремонтламалли 1942 çулти IV-мĕш квартал планне пирĕн МТС 125 процент пурнăçларĕ. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне МТС мастерскойĕнчен пурĕ 35 трактора юсаса кăларнă. Вĕсене пурне те тĕрĕслесе актсемпе çирĕплетсе йышăннă. Кунсăр пуçне IV-мĕш кварталта 31 плуга, 17 сеялкăна, 8 лущильника, 15 культиватора юсаса çуракине тухма хатĕрлесе лартнă.

МТС-ăн ремонт тăвакан мастерскойĕ тракторсемпе машинăсен запаслă пайĕсене юсаса çĕнетес тата çĕнĕрен тăвас плана 4-мĕш кварталта ирттерсе пурнăçларĕ. Планпа пăхнă тăрăх 1942 çулăн IV-мĕш кварталĕнче пирĕн хамăрăн МТС-ăн мастерскойĕнче машинăсен запаслă пайĕсене 550 тенкĕлĕх çĕнĕрен тумалла, 2.700 тенкĕлĕх юсаса çĕнетмелле пулнă. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе машинăсен запаслă пайĕсене пурĕ 5.565 тенкĕлĕх юсаса çĕнетнĕ, 1017 тенкĕлĕх çĕнĕрен тунă.

Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Ефимов, Елахов, Ванеев юлташсем ертсе пыракан 9—1—13-мĕш бригадăсем тракторсене юсамалли çулталăк планне пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç, ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсене те пĕтĕмĕшпех юсаса ремонт ĕçне вĕçлерĕç.

П. ВАСИЛЬЕВ,
МТС директорĕ.

ТИХАСЕНЕ ĔÇЕ ВĔРЕНТЕÇÇĔ

СЕНТЕРВАРРИ. Юртăкасси ялсоветĕнчи «Искра» колхоз çуракинче ĕçлеме 1940 çулта çуралнă тихасене ĕçе вĕрентме тытăнчĕ. Тихасене кӳлĕнсе çӳреме конюх И. Архипов юлташ вĕрентет. Вăл çамрăк тихасене кашни кунах пушă çуна кӳлсе уçăлтарса çӳрет. Çапла вăл 8 тихана ĕçе вĕрентрĕ те ĕнтĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозра тата «Социализм» колхозра та çамрăк тихасене ĕçе вĕрентеççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

ТИМĔР-ТĂМĂР ПУХАÇÇĔ

СЕНТЕРВАРРИ. Шуршăлти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе пионерсем 240 килограмм тимĕр-тăмăр пухса сельпо лавкине леçсе пачĕç. А. Колесников, И. Осипов, В. Васильев, Н. Терентьев 1. ыт. пионерсем кашниех 20-шер килограмм пухрĕç. Çавăн пекех тата Упакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 2 центнер, Чăрăшкассинчи пуçламĕш шкулта вĕренекенсем 185 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Леонид Агаков

Пĕрре, тĕттĕм каç...

(К А Л А В)

Икĕ талăка яхăн пычĕ хаяр çапăçу.

Сарлака уй тӳпинчи яла пур енчен те йĕплĕ пралукпа карталаса, темиçе накатлă блиндажсем, кукăр-макăр траншейăсем, окопсем, пулемет йăвисем туса кĕрсе ларнă нимĕçсем калама та çук хытă хирĕç тăчĕç. Тактика тĕлĕшĕнчен питех те паха высотана ниепле те парахса хăварасшăн пулмарĕç вĕсем, атака хыççăн атака тăвакан совет боецĕсем çинелле хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕсенчен таттисĕр персе тăчĕç, ик-виçĕ хутчен те контратакăсем тума пикенчĕç, анчах юлашкинчен пурпĕр тӳссе тăраймарĕç,—пирĕн саперсем йĕплĕ пралука темиçе çĕртен касса тунă «алăксенчен» пехота сăрхăнса кĕме пуçласан, ялăн хĕвеланăç енчи вĕçĕнчен тухса, çывăхри вăрманалла тарма тапратрĕç.

Вăл кун иртенпех çил вĕркелеме пуçланăччĕ те, каçаллапа çанталăк пăсăлсах кайрĕ. Юлашки нимĕçсене ялтан хӳтерсе кăларнă чух, куç-пуç курайми çил-тăман çавăрттарма тытăнчĕ. Батальон командирĕ—темиçе уйăх хушши пĕрмай çапăçусенче пиçнĕ капитан—çитес ирччен ял хыçĕнче оборона йышăнса тăма шут турĕ. Боецсем те хытă ĕшеннĕччĕ ĕнтĕ, вĕсене те пĕр хушă кантармаллах пулнă.

Часах, комбат вырнаçнă блиндажа связистсем телефон пырса лартрĕç. Полк штабĕпе темиçе минут хушши каласса хăйĕн шухăшне пĕлтерсен, вăл хăйсене наступленире пулăшса тăнă батарейăна чĕнме пикенчĕ:

— Баку! Алло, Баку! Итле мана. Эпĕ —Муром. Му-ром. Трубкăна хуçана парăр-ха...

«Хуçа»—батарея командирĕ, лейтенант Простяков, комбатăн çывăх тусĕ. Вăл çамрăк, çуркунне кăна — вăрçăччен пĕр уйăх малтан çеç—Т. хулинчи артшкултан вĕренсе тухнă, анчах унăн кăкри çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ ялтăртатать те ĕнтĕ. Полкра ăна пурте «артист» тесе чĕнеççĕ, мĕншĕн тесен унăн батарейĕнчи пур расчетсем те артистла ăсталăхпа ĕçлеççĕ. Пĕр снаряд та сая каймасть вĕсен, яланах кирлĕ çĕре пырса çапать:

— Уйрăм çуртсене çеç мар, любой пĕчченл саракан йывăçа та лектереççĕ Простяковăн «пушкарĕсем», заказ пар кăна,—теççĕ вĕсем çинчен.

— Итле-ха, Андрюша,—терĕ капитан, трубкăра хăйĕн тусĕн сассине илтсен.— Фрицсем ялтан сылтăм енчи рашана тапса сикрĕç... Илтрĕн пуль çав. Хыпашла-ха эс вĕсене пăртак... Вырнаçса ларма парас пулмасть! Тĕрĕс, контратака тума та шут тытĕç тата. А манăн хамăн çынсене ирччен чăрмантарас килмест, мĕншĕнне—ху пĕлетĕн, икĕ талăк куç та хупман вĕт... Юрать эппин? Пăртак тăрсан татах чĕнĕп-ха сана.

Комбат трубкăна хучĕ те, планшетĕнчен карттă кăларса, ăна консервă банкĕнчен тунă «мигалка» умне тытрĕ. Унччен те пулмарĕ—инçетре умлăнхыçлăн тупăсем ухлатни илтĕнчĕ. Йывăр снарядсем нимĕçсенчен халь çеç тытса илнĕ блиндажсен çийĕпе шăхăрса иртрĕç те, малти рашара хаяррăн шартлатса çурăлчĕç. Кăштах тăрсан татах шăхăрса иртсе кайрĕç, татах çĕр чĕтренсе илчĕ.

— Пуçларĕ пирĕн артист хăйĕн музыкине... — терĕ те капитан аппарат патĕнче ларакан телефониста, ирхи наступлени планне—тен çирĕмĕш хут-и! —пăхса тухма тытăнчĕ...

Вăхăт шурĕ. Комбатăн аллинчи сехет йĕппи майĕпе пĕрре патнелле те çывхара пуçларĕ. Тупă сассисем пасăрах чарăнчĕç,—нимĕçсен пуçĕ çине пĕр астрăм вилĕм кӳрекен тимĕрпе çулăм сапнă хыççăн—батарея шеме пăрахрĕ. Халь ĕнтĕ нихăш енчен те пĕр сас та илтĕнмерĕ, шăнах пулса тăчĕ. (Фронтра тепĕр чух çавăн пек те пулкалать). Анчах çанталăк пасăрхи пекех ахăрчĕ, хĕвелтухăçĕнчен вĕрекен каскăн çил çĕр тĕслĕн шăхăрчĕ, макăрчĕ, çусах тăракан юра çавăрттарчĕ, ăса-ăса сапрĕ.

Кун пек чухне фронтра пушшех сыхă пулас пулать. Çакна астуса, комбат хуралсене вăйлатса, тавралăха пит те çивĕч куçсемпе сăнаса тăма хушрĕ. Блиндажсенче боецсем епле вырнаçнине, пулеметсене мĕнле хатĕрлесе лартнине хăй тĕрĕслесе тухрĕ, унтан вара хăйĕн команднӑй пунктне таврăнса, нимĕçсем тасташ сĕтĕрсе килсе лартнă сĕтĕк диван çине тайăнчĕ. Анчах çывăрса каясси пулмарĕ унăн... Малтан урнă çилĕн музыки пĕрмай хăлхара янраса чăрмантарчĕ, унтан пуçра тĕрлĕ шухăшсем çуралма пуçларĕç, килти-сем аса килчĕç... Юлашки ик-виçĕ эрне хушшинче вăл арăмĕпе ачисенчен темиçе çыру та илнĕ—хирĕç пĕр ответ та çырса ярайман: вăхăт çук, ялан малти линире, наступленире, атакăра... Епле пулсан та çырса ярас пулать, пăшăрханаççĕ пуль тата...

Çапла шухăшласа выртнă май, капитан хуллен тĕлĕрсе каймах пуçланăччĕ —сасартăк ун блиндажне пĕтĕмпех юр айне пулнă сержант кĕрсе тăчĕ.

— Комбат юлташ,—терĕ вăл васкавлăн—сулахай флангра ман боецсем тăшманăн уйрăм салтакĕсене асăрханă! Ахальрен мар—контратака тума пухăнаççĕ пуль, тетĕп...

— Миçе метрта?—вăштах сиксе тăрса ларчĕ комбат.

— 200—250...

— Пулеметчиксем вырăнта-и?

— Пурте вырăнта, халь тĕрĕслерĕм...

— Хатĕр пулччăр!

— Вĕсем хатĕр.

— Юрать. Анчах эпир вĕсене малтанлăха йывăртарах кучченеçсем туянтарар-ха!—Çак сăмахсемпе комбат телефон трубкине тытрĕ,—Баку! Алло, Баку!

Ответ паракан пулмарĕ пулмалла, комбат чылай вăхăт трубкăна вĕре-вĕре итлесе тăчĕ. Унтан тата темиçе хутчен те «Баку, Баку!» тесе кăшкăрчĕ. Унăн халиччен лăпках пулнă сăнĕ улшăнма пуçларĕ, сӳлти тутин хăрах хĕрри сике-сике илчĕ, пушă аллин пӳрнисем трубкăран тăсăлакан провода хăйсем тĕллĕнех пĕтерме тапратрĕç...

— Алло, Баку! Баку, мать честная!— юлашки хут кăшкăрса чĕнчĕ те комбат, ним тума пĕлмесĕрне трубкăна аллинчен пăрахрĕ.

— Ответ памаççĕ, лини пăсăлнă курăнать!—терĕ вăл, куçĕсемпе блиндаж ăшчиккине хыпашласа.—Ăçта сменнăй телефонист?

— Эпĕ!—çав самантрах сас пачĕ кĕтесре ларакан маттур кăна çамрăк красноармеец, ура çине тăрса.—Мĕн хушатăр?

— Лини пăсăлнă, тетĕп, ним сас та çук,—пуçĕпе аппарат еннелле сулчĕ комбат.

— Илтрĕм ăна,—терĕ телефонист.

— Халех тӳрлетес пулать. Телефонсăр эпир пĕр минута та ларма пултараймастпăр. Халех хăвăн хатĕрӳсене ил те кай... Лини тăршшĕ сакăр километр, ăна тĕрĕслеме сана...—Комбат аллинчи сехечĕ çине пăхрĕ,—пĕр сехет çурă паратăп. Халь—вунă минутсăр 2, санăн 3 те 20-чен линин леш вĕçне тухса манпа калаçма ĕлкĕрмелле. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм. Есть

— Бĕçтер.

Красноармеец йăпăр-япăрах маскировочнăй халат тăхăнчĕ, хулпуççи урлă пĕр катушка, инструментсен сумкине çакрĕ, сылтăм аллине винтовка тытрĕ те—алăкран пĕшкĕнсе тухрĕ. Анчах тепĕр утăм ярса пусиччен хăйне каллех комбат чĕннине илтрĕ:

— Чим-ха, связист! Сан хушамату мĕнле çав?

— Бойков, комбат юлташ!—терĕ те вăл ăна хирĕç, блиндажран сиксе тухрĕ. Ăна тӳрех çил-тăман çавăрса илчĕ, шинель аркисене ласкама тытăнчĕ, питкуçĕнчен юрпа сапма тапратрĕ. Унăн урисем пĕрмай путса пычĕç, вырăнĕ-вырăнĕпе вăл пилĕк таранах анса ларчĕ, çапах та пĕр самантлăха та чарăнса тăмарĕ, телефон линийĕ тăрăх—хăш тĕлте чупса, хăш тĕлте утса, тепĕр çĕрте тата упаленсе те—пĕрмай малалла пычĕ.—Вăхăт сахал, лини вăрăм ĕлкĕрес пулать...

Километр хыççăн километр кая тăсăлса юлчĕ. Малта вăрман мĕлки курăнма пуçларĕ.

— Çур çула ытла килтĕм...—шухăшларĕ Бойков.—Батарея çак вăрман хыçĕнче, вĕтлĕхре тăма кирлĕ. Вăрманта лăпкăрах пулĕ-ха...

Татах малалла утрĕ. Хутран-ситрен юр çине чĕркуçленсе ларса, юр айне пулнă провода аллисемпе хыпашласа пăхрĕ, ĕçленĕ май хăй тĕллĕн хуллен кăна мăкăртатса калаçрĕ.

— Кунта тĕрĕс-тĕкел... Курăпăр-ха, малалла мĕн пулĕ...

Комбат патĕнчен тухнăранпа вăхăт пĕр сехете яхăн иртрĕ. Бойков вăрманалла кĕрсе кайрĕ. Кунта юр хирти пек те мар тарăн иккен, тата мамăк пекех çемçе, ниепле те хăвăрт кайма çук—питĕ путать. Урисен урине аран-аран ирттеркелесе, вăл пĕр уçланкăна çитсе тухрĕ. Пăхать—уçланкă хĕрринче провода урлă тем пысăкĕш йывăç ӳкнĕ. Те çилпе, те пĕр-пĕр ухмах снаряд ăнсăртран пырса лекнипе тăсăлса аннă-ха вăл—кам пĕлет?

— Тем тесен те, лини çак тĕлте татăлнă!—тесе шухăшларĕ те Бойков, провода аллинчен вĕçертмесĕрех тĕрĕслесе пыма тытăнчĕ.

Вăл шухăшлани тĕрĕсех пулнă иккен. Телефон провочĕ шăпах йывăç ӳкнĕ тĕлте татăлнă пулнă, çавăн пиркиех Бойковсен батальонĕпе батарея хушшинчи çыхăну пĕтсе ларнă.

(Юлашки пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Г. Т 1204. Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф б. 58 84 п.